**Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение**
**«Верхнеачакская  средняя общеобразовательная школа им. А.А. Айдак»**
**Ядринского района Чувашской Республики**

| | | |
|---|---|---|
| ***Рассмотрена*** | ***«Согласовано»*** | ***«Утверждаю»*** |
| ***на заседании ШМС*** | ***зам. директора по УВР*** | ***Директор*** |
| ***Протокол №__*** | ***_________С.В. Степанова*** | ***МБОУ «Верхнеачакская СОШ им А.П.Айдак»*** |
| ***от «30» августа 2022 г.*** | ***«30» августа 2022г.*** | ***__________ Т.А. Яжейкина*** |
| ***Руководитель*** | | ***Приказ №236 «30» августа 2022г.*** |
| ***___________*** | | |

МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ " ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Подписан: МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ " ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
DN: ИНН=002119003186, СНИЛС=01464605429, ОГРН=1022102628877, STREET="ул. Ленина, 38а", E=vasosh@gmail.com, C=RU, S=Чувашская Республика - Чувашия, L=д. Верхние Ачаки, O="МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "" ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК"" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ", G=Татьяна Анатольевна, SN=Яжейкина, T=директор, CN="МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "" ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК"" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ"
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: место подписания
Дата: 2022-11-07 15:08:49
Foxit Reader Версия: 9.7.1

# Рабочая учебная программа по родному (чувашскому) языку для 6 класса на уровне основного общего образования

**Составитель Максимова Галина Владимировна,**
**учитель чувашского языка и литературы**
**высшей категории**

**Верхние Ачаки – 2022**

**Программăна çак документсене тĕпе хурса ĕçленĕ:**
- Федерального государственного образовательного стандарта основного общего образования (утвержден приказом Минобрнауки России от 17.12.2010 г. № 1897, (зарегистрирован в Минюсте России 01.02.2011 г., регистрационный номер 19644), с изменениями, внесенными приказами Министерства образования и науки № 1644 от 29.12.2014; № 1577 от 31 декабря 2015);
- основной образовательной программы основного общего образования МБОУ «Верхнеачакская СОШ им. А.П. Айдак» Ядринского района Чувашской Республики
- Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2013;
- Л.Г.Петрова, Ю.М.Виноградов. Чăваш чĕлхи: 6-мĕш класс валли / Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014.

**Программăна пурнăçа кĕртмелли вăхăт: 2022-2023 вĕренӳ çулĕ**
Шкулăн вĕренӳ планĕнче вĕренӳ çулĕ 35 эрнепе танлашнине шута илсе хамăн ĕç программине 70 сехетпе çыртăм.

## Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем

### Харкамлăх результачĕсем

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ълĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире уса курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

### Пур предмета та вĕренме кирлĕ (метапредметлă) результатсем

1) пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:
- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни;
- вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;
- тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материал çине таянса информаци пухма пултарни;
- ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕре çитерме пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);
- пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренъ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;
- шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предметсене (тăван мар чĕлхесене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

### **Предмета вĕреннин** результачĕсем

1) чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулса тăнине ăнланни; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни:

*илтнине ăнланни тата вулав хăнăхăвĕ:*

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернине (текст тĕллевне, темине, тĕп тата хушма информацине) кирлĕ пек ăнланни;
- стильпе жанр енчен мĕнле пулнине пăхмасăр текста вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (çиелтен пăхса тухни, паллашмалла пăхса тухни, вĕренни) усă курни;
- вуланă текста информаци енчен улăштарса çĕнетме (план тума, тезиссем çырма) пултарни; кĕнекепе, хаçат-журналпа ĕçлеме пĕлни;
- словарьсен тĕрлĕ тĕсĕпе, пĕлкĕчсемпе (вăл шутра электрон носителе кĕртнисемпе) усă курма хăнăху пурри;
- стильпе жанр енчен расна текстсене çын вулани тăрăх ăнланни; аудированин тĕрлĕ тĕсне (тулли ăнланни, тĕп содержанине ăнланни, кирлĕ информацие суйласа илни) алла илни;
- пуплев сыпăкĕсене содержани, функци, усă курнă чĕлхе хатĕрĕсем тăрăх танлаштарма пултарни;

*сăмах вĕççĕн калани тата çыру:*

- итленĕ е вуланă текста пĕр-пĕр виçепе кĕскетсе (улăштармасăр, план туса, тезис хатĕрлесе) каласа е çырса пани;
- шухăша сăмахпа каласа тата çырса ирĕклĕн те тĕрĕс уçса пама пултарни; текст тытăмне тĕрĕс тытса пыни (логикăлăх, шухăш юхăмĕн йĕркелĕхĕ, çыхăнулăх пурри, темăпа килĕшсе тăни); çыраканнин пурнăçри пулăмсем çинчен, вулани-илтни çинчен хăй шухăшне калама хăнăху пурри;
- стильпе тĕсне кура хутшăну тĕллевне, лару-тăрăвне шута илсе сăмахпа каласа е çырса ку е вăл йышши текст хайлама пултарни; хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултани;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлни; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума хăнăху пурри;
- пуплевре литература чĕлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыни; сăмахсемпе пĕлсе усă курни; çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнни;
- çынсемпе калаçнă чух пуплев этикетне шута илни; чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курни;
- кашни хăйĕн пуплевне сăнаса тĕрĕслесе тăма, содержани, чĕлхе енчен, хутшăну тĕллевне пурнăçлас тухăçлăхĕ енчен хаклама пултарни; грамматикăпа пуплев йăнăшĕсене тупма, търлетме пултарни; харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме вăй çитерни;

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;

5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст; чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхĕсем;

6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренӳ результачĕсене хакламалли мелсемпе меслетсем**

**Ачасен ĕçĕсене хакламалли виçесем**

***Сăмахпа каласа хуравланине хакламалли ĕçсем***

Ачасем чăваш чĕлхи çинчен мĕн пĕлнине тĕрĕслемелли меслетсенчен пĕри вăл – сăмахпа каласа хуравлани. Ачан хуравĕ тулли, çыхăнуллă, шухăш енчен йĕркеллĕ тытса грамматика пулăмне тĕрĕс ăнлантарма пĕлмелле.

Вĕренекенĕн хуравне хаклană чухне çак критерисене тĕпе хумалла: 1) туллилĕхпе тĕрĕслĕхĕ; 2) вĕреннине мĕн таран ăнланни; 3) литература чĕлхин нормисене пăхăнни.

«5» паллăвиçи: а) ача вĕреннĕ материала пĕтĕмпех ăнланать, туллин каласа парать; ă)каланине кĕнекери тĕслĕхсемпе çеç мар, хăй тупнисемпе те çирĕплетме пултарсан; б) материала йĕркипе, çыхăнуллă, литература чĕлхин нормисене пăхăнса каласа парать.

«4» паллă виçи: ача «5» паллă хаклавĕн материалне пĕтĕмĕшле пĕлме тивĕç, учитель асăрхаттарнă йăнăша хăй тĕллĕн тӳрлетме пултармалла. Шухăш йĕркине 1-2 çĕрте литература номерне 1-2 тĕлте пăсма юрать.

«3» паллă виçи: ача вĕреннĕ тема материалне туллин уçса параймасть, правилăсене тĕрĕс калаймасть, каланине хăй тĕслĕхсемпе çирĕплетеймест, çыхăнуллă калаймасть, пуплев йăнăшĕсем 3-4 çитме пултараççĕ.

«2» паллă виçи: ача вĕреннĕ материалăн чылай пайне пĕлмест, правилăсене тĕслĕхсемпе çирĕплетеймест, пăтраштарса, çыхăнусăр калать, материала пачах плейменни туйăнать пулсан.

«1» паллă ача вĕреннĕ материала пачах пĕлмесен лартмалла.

***Вĕренекенсен çыру ĕçне хакласси***

***Çырса илни (пăхса çырни)***

Çырса илме паракан текст калăпăшĕ 6 класра 50-60 сăмахран иртмелле мар. Çырса илнине хакламалли виçесем: «5» паллăĕçе тирпейлĕ, йăнăшсăр, тĕрĕс пурнăçланă пулсан лартмалла; «4» паллă грамматика ĕçне пурăçанă чухне 1-2 йăнăш янă пулсан лармалла; «3»паллă лартнăĕçре 3-4 йăнăшран ытла пулмалла мар; «2»паллă лартмалли ĕçре йăнăш 5-рен пуçласа 9-а çитме пултарать; «1» паллă лартмалли ĕçре 10 е ытларах йăнăш пулать.

Çырса хуравланине хакласси

5-11 классенче ачасен пĕлĕвне тĕрĕслеме çырса хуравлани те вырънлă. Ку мелпе 5-6 класс ачисем текста мĕнле ăнланнине тата предложенисене тĕрĕс йĕркелеме пултарнине тĕрĕслеме усă кураççĕ. Çырса хуравламалли ыйтусене унччен вуланă текст, пурнăçпа çыхăннă пĕр-пĕр кăткăс та интереслĕ тема тавра е ӳкерчĕк тăрăх (çырнă чух ӳкерчĕк ачасен куçĕ умĕнче пулмалла), диафильмпа кинофильм е вĕсен сыпăкĕсем тăрăх йĕркелемелле.

Вуланă текст тăрăх хатĕрленĕ ыйтусене хуравлани чылай енчен изложение çывăх. Çавăнпа ыйтусен изложени планĕ евĕр йĕркелеме юрать. Пĕр-пĕр темăпа хатĕрленнĕ ыйтусене хуравласа çырни сочинени майлă. Çавăнпа та ачасем хуравласан çырнăçĕре сăмах йышĕ (енчен те кашни ыйтăва 1-2 предложенипе хуравласан) çырса илме паракан текстринчен иртмелле мар.

5 класра 6-10 ыйту пама юрать (енчен те ача кашни ыйтăва 4-6 сăмахран тăракан предложенипе хуравлать пулсан).Çырса хуравланăĕçсене хакланă чухне çакна шута илмелле:

а) хуравсем тулли, тĕрĕс çыпăçуллă пулни;

ă) чĕлхене пĕлни;

б) орфографипе пунктуации хăнăхăвĕ.

Ĕçе пур енлĕн тишкерсе пĕр паллăпа хакламалла:

«5» паллă – пур ыйтăва та тĕрĕс хуравлană (хуравра 1 пуплев, 1 орфографи йăнăшĕ пулма пултарать).

«4» паллă – пур ыйтăва та тĕрĕс хуравлană, анчах та ĕçре 3 орфографи йăăшĕпе 2 пунктуаци йăнăшĕ е пĕр-икĕ хуравра 2-3 пуплев йăнăшĕ пур.

«3» паллă – панă ыйтусене хуравлама пултарнă, анчах та 4-5 орфографи йăнăшĕ, 3-4 пунктуаци йăнăшĕ, 4 пуплев йăнăшĕ тĕл пулать.

«2» паллă – панă ыйтусенчен çуррине хуравлайман, текст содержании енчен аяккалла пăраннă, 6-10 орфографи тата 5-6 пунктуаци йăнăшĕ янă, пуплев йăнăшĕ, «3» паллă лартмалли виçерен иртсе кайнă.

«1» паллă – ача ыйтусене пачах та хуравлайман, çырура йăнăшсем «2» паллă лартмалли виçерен нумайрах.

Тест хуравĕсене хакласси
0-32 балл – «2»
33-50 балл – «3»
51-70 балл – «4»
71- 100 балл – «5»

**Диктантсене хакламалли виçесем**

Тĕрĕслев диктанчĕн калăпăшĕ 5 класра 90-100 сăмахлă пулмалла.

«5» паллăĕçе йăнăшсăрçырсан. 1 пĕчĕк орфографи йăнăшĕ е пĕчĕк пунктуаци йăнăшĕ пулсан лартмалла.

«4» паллă виçи: орфографи йăнăшĕ 2 тата пунктуаци йăнăшĕ 2; е орфографи йăнăшĕ 1 тата пунктуаци йăнăшĕ 3; пунктуаци йăнăшĕ 4.

«3» паллă виçи: орфографи йăнăшĕ 4 тата пунктуаци йăнăшĕ 4; орфографи йăнăшĕ 3 тата пунктуаци йăнăшĕ 5 çитсен; е пунктуаци йăнăшĕ ёеё 7 пулсан;

«2» паллă: орфографи йăнăшĕ 7 таран пулсан тата пунктуаци йăнăшĕ 7 иртмесен; е орфографи йăнăшĕ 6 тата пунктуаци йăнăшĕ 7; е орфографи йăнăшĕ 5 тата пунктуаци йăнăшĕ 9; е орфографи йăнăшĕ 8 тата пунктуаци йăнăшĕ 6 пулсан.

Тĕрĕслев ĕçĕ диктантран тата хушса панăĕçрен тăрать пулсан - ăна иккĕ паллăпа хакламалла. Ун пек чух диктант калапăшне 15 сăмах таран кĕскетме юрать.

**Хушма грамматика ĕçĕн хаклав виçи**

«5» паллă – ĕçе пĕтĕмпех тĕрĕс тунă;
«4» паллă – ĕçĕн 3|4 пайне тĕрĕс тунă;
«3» паллă – ĕçĕн 1|2 пайне тĕрĕс тунă;;
«2» паллă – ĕçĕн ёурріне те туман.

**Тĕрĕслев сăмах диктанчĕн хаклавĕ**

«5» паллă – пĕр йăнăш та çук;
«4» паллă – 1-2 йăнăш;
«3» паллă – 3-4 йăнăш;
«2» паллă – 5-7 йăнăш таран.

**Сочиненисемпе изложенисене хакламалли виçесем**

Сочиненисемпе изложенисем ачасем шухăша тĕрĕс, çыхăнуллă йĕркелесе çырма пултарнине, пуплев аталанăвĕн шайне тĕрĕслемелли тĕп формăсем шутланаççĕ.

5-9 классенче изложенисемпе сочиненисем çыртарнă чух вĕренекенсен калаçупа çырăвне аталантарма программăра мĕн-мĕн палăртнине асра тытмалла.

Изложени валли ăс-пуçа аталантарас, кăмăл-сипете çирĕплетес енчен лайăх текст илмелле. Калăпăшĕ вăтамран 5 класра 95-130 сăмах пулмалла.

Изложенин е сочиненин содержанине хакланă чухне çак енсене шута илмелле:
а) çырни темăпа, тĕп шухăшпа килĕшсе тăнине;
ă) ĕçсене туллин çырса панине, фактсене тĕрĕс çырса кăтартнине;
б) стиле яка тытса пынипе пыманнине.

**Изложенипе сочинени хаклавĕ**

| Хаклав палли | Мĕн шута илмелле | |
|---|---|---|
| | Содержанипе чĕлхе пуянлăхĕ | Тĕрĕс çырма пĕлни |
| 1 | 2 | 3 |

| | | |
|---|---|---|
| «5» паллă | Çырса пани темăпа килĕшӳллĕ. Тĕп шухăша ăнланса, туллин, пăтраштармасăр çырса кăтартнă,сăмах пĕлтерĕшне пăтраштарман. Сăмах йышĕçителĕклĕ. Предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен лайăх йĕркеленĕ. Стиль енчен килĕшӳллĕçырнă . Сочинени содержанийĕнче пуплевре пĕрер çитменлĕх пулма пултарать. | 1орфографи йăнăшĕ; (е 1 пунктуаци йăнăшĕ;1грамматика йăнăшĕ ) |
| «4» паллă | Пĕтĕмĕшпе илсен содержании темăпа килĕшӳллĕ, анчах кăшт унран пăрăнни пур. Çырни, тĕпрен илсен, тĕрĕс, анчах уйрăм çĕрте фактсене пăснă. Шухăш татăлни тĕл пулать. Сăмах йышĕçителĕклĕ, пĕр стилпе çырнă, чĕлхи илемлĕ. Содержанире 2, пуплевре 3-4 çитменлĕх пулма пултарать. | 2 орфографи йăнăшĕпе 2 пунктуаци йăнăшĕ (е 1 орфографи йăнăшĕпе 3 пунктуаци йăнăшĕ ; е 4 пунктуаци йăнăшĕпе 2 грамматика йăнăшĕ ) |
| «3» паллă | Ĕçе темăран чылай пăрăнса çырнă. Тĕп шухăшсене каласа панă, анчах тĕрĕсех мар фактсем пур. Йĕркеллех, çыхăнуллах çырман. Сăмах йышĕ чухăнрах, шухăша тивĕçлине суйласа илмен, пĕр пек предложенисемпе усă курнă. Стиль тикĕслĕхĕçук, илемлех çырман. Ĕçре содержани енчен 4 çитменлĕх, пуплев енчен 5 çитменлĕх пур. | 4 орфографи йăнăшĕпе 4 пунктуаци йăнăшĕ( е 3 орфографи йăнăшĕпе 5 пунктуаци йăнăшĕ ; е 7 пунктуаци йăнăшĕпе 4 грамматика йăнăшĕ ) |
| «2» паллă | Ĕçре темăна уçса паман. Содержанире тĕрĕс мар вырăн чылай. Шухăш çыхăнуллăхĕ ĕук, план тăрăх çырман. Стиль пĕр пек мар. Содержанипе пуплевре 6-7 çитменлĕх пур. | 7 орфографи йăнăшĕпе 7 пунктуаци йăнăшĕ( е 6 орфографи йăнăшĕпе 8 пунктуаци йăнăшĕ ; е 5 орфографи йăнăшĕпе 9 пунктуаци йăнăшĕ; е 8 орфографи, 6 пунктуаци йăнăшĕ тата 7 грамматика йăнăшĕ ). |

**Чăваш чĕлхипе литература пуплевне тата пуплев хăнăхăвне изложенипе сочинении тăрăх хакламалли пĕтĕмĕшле таблица.**

| | содержани | пуплев | орфографи | пунктуаци | грамматика |
|---|---|---|---|---|---|
| «5» | 0-1<br>0-1<br>0-1<br>0-1 | 0-1<br>0-1<br>0-1<br>0-1 | 0<br>0<br>0<br>1 | 0<br>1<br>0<br>0 | 0<br>0<br>1<br>0 |
| «4» | 0-2<br>0-2<br>0-2<br>0-2<br>0-2<br>0-2<br>0 | 0-3<br>0-3<br>0-3<br>0-3<br>0-3<br>0-3<br>0 | 0<br>0<br>0<br>1<br>1<br>2<br>3 | 1<br>0-1<br>2-5<br>0<br>1-3<br>0-4<br>0 | 1<br>2<br>0-2<br>1-2<br>0-2<br>0-2<br>0 |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| «3» | 0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4<br>0-4 | 0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5<br>0-5 | 0<br>0<br>1<br>1<br>2<br>2<br>3<br>4<br>5<br>6 | 0-4-8<br>0-9<br>0-3<br>4-6<br>0-3<br>4-6<br>0-5<br>0-6<br>0-5<br>0-6 | 3-4<br>0-4<br>3-4<br>0-4<br>3-4<br>0-4<br>0-4<br>0-5<br>0-5<br>0-6 |
| «2» | 0-6<br>0-6<br>0-6<br>0-6<br>0-6 | 0-7<br>0-7<br>0-7<br>0-7<br>0-7 | 5<br>6<br>7<br>8<br>9 | 9<br>8-10<br>7-9<br>0-8<br>7 | 0-6<br>0-6<br>0-6<br>0-6<br>0-6 |

**Программа (вĕренӳ) содержанийĕ**

VI класс

**Тăван чĕлхе – пĕлӳ çăл куçĕ** (кӳртĕм урок)*)*

**5-мĕш класра вĕреннине аса илесси**

1. Морфологи – чĕлхери сăмахсен тытăмĕ, вĕсен ушкăнĕсемпе пĕлтерĕшĕсем çинчен вĕрентекен наука..

**Чĕлхери сăмахсене ушкăнламалли яланхи йĕрке. Çĕнĕлле ушкăнлама май пурри:**

**-хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: тулли пĕлтерĕшлисем, тулли мар пĕлтерĕшлисем**;

- пулăшу сăмахĕсем (союзсем, хыç сăмахсем, татăксем);
- междометисем.

Япала ячĕсем. Япала ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем.

- япала ячĕсен пуплеври тăтăшлăхĕ, паллă ячĕ пек те, наречии пек те çӳреме пултарни;
-тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем;
- пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем;
- япала ячĕсен хисепĕсем – пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп. Хисеп тăрăх улшăнман ятсем.

Пĕрреллĕ хисепĕн пуплеври уйрăмлăхĕсем. Нумайлăха палăртмалли мелсем.

- Япала ячĕсен пулăвĕ: аффикссем хушăнни, мăшăрлатни. Япала ячĕ тăвакан тухăçлă аффикссем.
- Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Вĕçленӳ уйрăмлăхĕсем. Япала ячĕсен падеж системине кĕмен аффикссем. Ку аффикслă япала ячĕсене паллă ячĕсемпе наречисенчен уйăрасси.
- Камăнлăха палăртмалли мелсем. Камăнлăх формисем(сăпатсемпе хисепсем). Камĕнлăх формисенчи япала ячĕсен вĕçленĕвĕ, вĕсене тĕрĕс каласси тата çырасси. Камăнлăх форми (3-мĕш сăпат) çыхăнăва палăртма пултарни.
- Вырăс чĕлхинчен йышăнакан япала ячĕсен вĕçленĕвĕ, вĕçленӳ формисене тĕрĕс çырасси.

**Паллă ячĕсем.**

Паллă ячĕсен пăлтерĕшĕ, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхĕсем. Паллă ячĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени.

Паллă ячĕсен пахалăх виçине кăтартакан формисем: тĕп, танлаштару, вăйлă.

Танлаштару тата вăйлă формăри паллă ячĕсене тĕрĕс çырасси.

Иккĕмĕшле паллă ячĕсем, вĕсен пулăвĕ.

Пахалăха хакланине палăртакан паллă ячĕсем.

Паллă ячĕсем –и, -скер аффикссем йышăнни, çав аффикслă формăсен улшăнăвĕ, улшăнăва кура тĕрĕс çырасси.
Паллă ячĕсен пуплеври вырăнĕ, вĕсем япала ячĕ умĕнче, япала ячĕ вырăнĕнче, глагол çумĕнче çӳреме пултарни.
Тулли мар пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем, вĕсем тулли пĕлтерĕшпе те çӳреме пултарни.
**Хисеп ячĕсем.**
**Хисеп ячĕсен пĕтĕмĕшле паллисем: пĕлтерĕшĕ,** морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем (мĕнле сăмахсемпе çыхăнма пултарни). Хисеп ячӳ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшпе çӳрени.
Тулли тата вак хисепсем. Хисеп ячĕсен ушкăнĕсем: шут, йĕрке, валеçӳ,пĕтĕмлетӳ. Вĕсен паллăрах уйрăмлăхĕсем, пуплеври вырăнĕ.
Шут хисепĕсен туллии тата кĕске формисем.
Шут хисепĕсем –ри(-ти) аффикс йышăнни.
Хисеп ячӳсен вĕçленĕвĕ, вĕçленӳри уйрăмлăхсем. Хисеп ячĕсене тĕрĕс ăырасси.
**Местоименисем.**
Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем.
Местоимени ушкăнĕсем.
Местоименисен вĕçленĕвĕ. Местоименисене тĕрĕс çырасси.
**Наречи.**
Наречин пĕлтерĕшĕ, ытти пуплев пайĕсенчен уйăрмалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ.
Наречипе япала ячĕ, наречипе паллă ячĕ, наречипе деепричасти.
Наречисене тĕрĕс çырасси.
Наречипе ытти пуплев пайĕсен синонимлăхĕ.
Наречисемпе тан пĕлтерĕшлĕ сӳмах ушкăнĕсем.
**Евĕрлев сăмахĕсем.**
Евĕрлевсен пĕлтерĕшĕ, пуплеври вырăнĕ. Евĕрлев сăмахĕ ытти пуплев пайĕ пĕлтерĕшĕпе çӳрени.
Евĕрлевсен тĕсĕсем: сасă евĕрлевĕсем, сăнар евĕрлевĕсем.
Евĕрлевсен вариантлăхĕ.Евĕрлевсенчен ытти пуплев пайĕсенчи сăмахсем пулни, çав сăмахсен стиль уйрăмлăхĕсем.
**Глагол.**
Глагол пĕлтерĕшĕ, тулашри паллисем. Глагол тĕпĕ.
Глаголăн пулаю форми.
Глаголăн сăпатлă формисем.
Кăтарту наклоненийĕ, вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни.
Кăтарту наклоненийĕ, унăн вăхăчĕсем: хальхи, иртнĕ, пулас. Иртнĕ вăхăт формисем: пĕрре иртнĕвăхăт, темиçе иртнĕвăхăт. Кăтарту наклоненийĕнчи глаголсене тĕрĕс çырасси.
Хушу наклоненийĕн формисене тĕрĕс каласси тата çырасси.
Ĕмĕт наклоненийĕ, унăн формисене тĕрĕс çырасси.
Килĕшӳ наклоненийĕ, унăн пĕлтерĕшĕ, сăпатланăвĕ. Сăпатлану формисене тĕрĕс çырасси.
**Текст**.
Текст. Ансат калаçупа сăпайлă калаçу. Калав, сăнлав, ăслав.

| **Вĕренӳ содержанийĕн темисем** | **Ачан вĕренӳ результачĕсем (ача мĕн-мĕн пĕлмелле тата пултармалла)** |
|---|---|
| **6-мĕш класс** | |
| Тăван чĕлхе – пĕлӳ çăл куçĕ. | Тăван чĕлхе, вырăс тата ытти чĕлхесем пекех, тĕрлĕ енлĕ пĕлӳ панине **ĕненмелле.** |
| Морфологи – чĕлхери сăмахсен тытăмĕ, вĕсен ушкăнĕсемпе пĕлтерĕшĕсем çинчен вĕрентекен наука. | Морфологи пуплев пайĕсем çинчен вĕрентекен наука пулнине **пĕлмелле.** |
| Чĕлхери сăмахсене ушкăнламалли яланхи йĕрке. Çĕнĕлле ушкăнлама май пурри. | Пуплев пайĕсем виçĕ пысăк ушкăна уйăлнине (хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулăшу сăмахĕсем, |

| | |
|---|---|
| | междометисем) **пĕлмелле.** Пирĕн чĕлхере хăй пĕлтерĕшлĕ хăш-пĕр сăмах тулли тата тулли мар пĕлтерĕшпе çӳреме пултарнине **асăрхамалла.** Çакă пирĕн чĕлхен пысăк уйрăмлăхĕ пулнине **ăнланмалла.** |
| Япала ячĕсем. Япала ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем. Пуплев тата хутшăну. | Япала ячĕн пĕлтерĕшне, морфологи паллисене **пĕлмелле,** текстра тупнă япала ячĕн паллисене кăтартма **пултармалла.** Япала ячĕ мĕнлерех сăмахсене пăхăнтарнине, мĕнле пуплев пайĕсене пăхăннине **курмалла.** Япала ячĕ ытти сăмахсемпе е вĕсен ушкăнĕсмпе мĕнле мелсемпе çыхăннине ăнлантарма **пултармалла.** Япала ятне ытти сăмахсемпе çыхăнтаракан ятарлă аффикссене **пĕлмелле,** вĕсем падеж системине кĕменнине **ăнланмалла.** Çыхăну мелĕсен синонимлăхĕпе усă курма пĕлмелле: *ялсерен – кашни ялта, ялтан яла; каçчен – каç пуличчен; упала ут – упа пек ут* т.ыт.те. Мĕнле сăмахпа çыхăннине кура япала ятне кирлĕ формăна лартма **пултармалла.** Тухăçлă аффикссем хушса иккĕмĕшле япала ячĕсем тума **пĕлмелле.** Иккĕмĕшле япала ячĕсен, камăнлăх формин стиль уйрăмлăхĕсене **чухламалла.**Пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп формисемпе тĕрĕс (пĕлтерĕшне тата мĕнле сăмахсем пăхăнса тăнине кура) **усăкурмалла.** Япала ячĕ пуплевре паллă ячĕ пек те, наречи пек те çӳреме пултарнине (*йывăç çурт – улма йывăç; Мăн кун эрни – чăваш чĕлхи урокĕ эрнере иккĕ пулать; кĕркунне çитрĕ – кĕркунне çумăр час-час çăвать)* уйăрса илмелле. Тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене **палласа илмелле,** сăмах хăш текстра тулли пĕлтерĕшлĕ иккенне (*кун иртет те, çул иртет)*, хăшĕнче тулли пĕлтерĕшлĕ маррине (*пĕр кун иртрĕ, виç çул иртрĕ)* **пĕлмелле,** пуплевре **тĕрĕсусăкурмалла.** Чăваш чĕлхинчи япала ячĕ вырăс чĕлхинчинчен мĕн енчен пĕрешкел е уйрăм пулнине **ăнланмалла.** |
| Паллă ячĕсем. Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхĕсем. Пуплев тата хутшăну. | Паллă ятне тупма, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсене (япала ячĕ вырăнĕнче, глагол çумĕнче çӳренине) кăтартма, пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлама **пĕлмелле.** Паллă ячĕсем япала ячĕ вырăнĕнче çӳреме пултарнине, глаголсемпе çыхăнма пултарнине курмалла. Иккĕмĕшле паллă ячĕсене япала ячĕсенчен уйăрма **хăнăхмалла.** Текстра тулли тата тулли мар пĕлтерĕшпе çӳрекен паллă ячĕсене **палласа илмелле,** вĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма **пултармалла.** Паллă ячĕсен хăйсен тата çыхăну мелĕсен синонимлăхĕпе усă курмалла: *çанталăк сивĕрен (сивĕшĕн, сиввипе) ачасем килтех лараççĕ.* Танлаштару тата вăйлă формăри паллă ячĕсене |

| | |
|---|---|
| | тĕрĕс çырма **пĕлмелле.** Чăваш чĕлхинче паллă ячĕ вырăс чĕлхинчипе танлаштарсан мĕн енчен раснарах пулнине (икĕ пысăк ушкăна уйрăлманнине, тулли тата тулли мар пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнине, хыç сăмах пĕлтерĕшĕпе çӳренине **курмалла.** |
| Хисеп ячĕсем. Хисеп ячĕсен пĕтĕмĕшле паллисем: пĕлтерĕшĕ, морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем. | Хисеп ячĕсене ытти пуплев ячĕсенчен **уйăрса илмелле**. Хисеп ячĕсемпе тĕрĕс усă курма **пултармалла.** Уйăхăн ку е вăл числине палăртнă чух сăмах йĕркине тĕрĕс **тытса пымалла** (*ака уйăхĕн çирĕм улттăмĕшĕ).* Пĕтĕмлетӳ хисепĕн формисене местоименипе тата местоименисĕр калама **хăнăхмалла:***эпир иксĕмĕр – иксĕмĕр*; *эсир иксĕр – иксĕр, вĕсем иккĕшĕ – иккĕшĕ; эпир иккĕн ĕçлерĕмĕр, эсир виççĕн пурăнтăр. Пĕрре* хисеп ячĕн йĕрке формине хăй тĕллĕн туллин те, кĕскен те (*пĕрремĕш е пĕрмĕш),* умĕнчи теçетке, çĕр тата ытти ятсемпе кĕскетсе çеç (*вун пĕрмĕш, пин пĕрмĕш)* калама тата çырма **пĕлмелле.** Шут формиче*вун пĕр* (кĕскен) **каламалла (***вун пĕрре* тени йăнăш). Япала ятне пăхăнса тăракан *аллă* хисеп ятнеединица ячĕсем пекех кĕке формăра калама (*алă страница)* **хăнăхмалла.** |
| Местоименисем. Местоименисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем, синтаксис уйрăмлăхĕсем. Местоименисен текстри вырăнĕ. Пуплев тата хутшăну. | Местоимени текстри предложенисене çыхăнтарма кирлине **курмалла.** Предложенисен шухăш тытăмне кура местоимение предложенин тема ушкăнне кĕртсе калама тата çырма **хăнăху аталантармалла**. Местоименисен падежĕсене уйăрма, ку е вăл падеж формисемпе литература чĕлхипе килĕшӳллĕ усă курма **пĕлмелле.** Местоимениллĕ пĕрлешӳсен синонимĕсемпе усă курма **пултармалла:** *кашни килтех – килсерен, килрен киле.* |
| Наречисем. Ытти пуплев пайĕсенчен уйăрмалли паллăсем. Наречисен пулăвĕ. Пуплев тата хутшăну. | Наречисемпе наречи пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене, паллă ячĕсене, хисеп ячĕсене, местоименисене пĕр-пĕринчен уйăрмалли мелсене **пĕлмелле.** Наречисемпе, ытти пуплев пайĕсен синонимлăхĕпе тата антонимлăхĕпе усă курма **пултармалла.** |
| Евĕрлев сăмахĕсем (евĕрлевсем). Евĕрлевсен пĕлтерĕшĕ, пуплеври вырăнĕ. Тĕсĕсем. | Евĕрлев сăмахĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсене, пуплевре мĕнле сăмахсемпе çыхăнура тăнине, сăмах пулăвĕнче мĕнле вырăн йышăннине, япала ячĕ пĕлтерĕшĕпе çӳреме пултарнине **ăнланмалла,** стильне кура вырăнлă усă курма, пуплеве синонимлăх вăйĕпе пуянлатма, орфографи енчен тĕрĕс çырма **пĕлмелле.** |
| Глагол. Глаголăн пĕлтерĕшĕ, тулашри паллисем. Глаголăн пулаю форми. | Глаголăн лексика пĕлтерĕшне **аса илмелле**, сăмах тытăмне **пĕлмелле,** глаголсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлама **пултармалла.** Глаголăн пулаю формине (*каяймарĕ, таяймарĕ, тееймерĕ, тееетĕп)* тĕрĕс **çырмалла,** вырăнлă усă курма |

| | |
|---|---|
| | **пĕлмелле.** |
| Глаголăн кăтарту наклоненийĕ. | Кăтарту наклоненийĕн формисене кулленхи калаçура кĕскетсе каласан та (*каяп, пĕлмес, каян, вăл каймаç, пĕлмеç)* литературăра туллин каламаллине тата çырмаллине (*каятăп, пĕлместĕп, каятăн, вăл каймасть, пĕлмест* т.ыт.те) **асра тытмалла**, темиçе иртнĕ вăхăт формипе **паллашмалла,** унпа калаçуратата çырура тĕрĕс усă курма **пĕлмелле.** Пĕр формăна тепĕр форма пĕлтерĕшĕпе каланине **асăрхамалла.** |
| Глаголăн хушу наклоненийĕ. | Хушу наклоненийĕн формисене тĕрĕс калама тата çырма **пултармалла.** 2-мĕш сăпатăн пĕррелле хисепри форми глаголăн пуçламăш форми шутланнине **чухламалла.** |
| Глаголăн ĕмĕт наклоненийĕ. | Ĕмĕт наклоненийĕнчи глагол мĕнле тытăмлă пулнине **пĕлмелле,** калаçура пĕлсе тата çырура тĕрĕс çырма **пултармалла.** |
| Глаголăн килĕшӳ наклоненийĕ. | Килĕшӳ наклоненийĕн формисемпе тĕрĕс усă курма, тытăмне ăнлантарса пама **пултармалла.** |
| Текст. Ансат калаçупа сăпайлă калаçу. Калав, сăнлав, ăслав. | Текстăн темипе тĕп шухăшне тупма, тытăмне ăнлантарма **пултармалла.** Ансат калаçăва сăпайлă калаçупа танлаштарма, пĕр-пĕринчен уйăрма **хăнăхмалла.** Текстăн хăш пайне мĕнле кĕвĕпе çырнине **ăнлантарма пултармалла.** Калаçăва е çырăва калав, сăнлав тата ăславкĕввипе йĕркелеме **пĕлмелле,** сочинени **çырмалла.** Сăмах вырăнĕнче çӳрекен сăмах майлашăвĕсемпе усă курма **пĕлмелле.** Хамăр таврара сарăлнă йывăç-курăк, чĕр чун, кайăк-кĕшĕк, хурт-кăпшанкă ячĕсене **пĕлмелле,** вĕсене пуплеве **кĕртсе пымалла**, çав ятсен, микротопонимсен словарĕсене тăвас **хăнăху пулмалла.** |

**Тематика планĕ**

| № | Урок теми | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| **Кӳртĕм – 1 сех.** | | |
| 1 | Тăван чĕлхе – пĕлӳ çăл куçĕ | 1 |
| **Вĕреннине аса илни – 2 сех.** | | |
| 2 | 5-мĕш класра вĕреннине аса илни. | 1 |
| 3 | Тĕрĕслев ĕçĕ. «Кĕрхи çанталăк» текст. (Петрова Л.Г., Егорова В.А. «Диктант пуххи», 44стр,<br>5-9кл валли. – Ш.,2006. | 1 |
| **Морфологи. Япала ячĕсем - 16 сех.** | | |
| 4 | Морфологи -чĕлхери сăмахсен тытăмĕ. | 1 |
| 5 | Япаля ячĕсем çинчен ăнлантарни. | 1 |
| 6 | Текст стилĕсем. | 1 |
| 7 | Тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем. | 1 |
| 8 | Падеж системине кĕмен аффикссем | 1 |
| 9 | Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем | 1 |
| 10 | Япала ячĕсен хисепĕ | 1 |
| 11 | ÇПАу1 «Иван Яковлевич Яковлев» 35стр. текст. (М.Г.Данилова, М.З.Табакова «Сочинени евĕр изложени тексчĕсен пуххи» чăваш шкулĕн 5-9класĕсем валли» | 1 |
| 12 | Япала ячĕсен пулăвĕ | 1 |
| 13 | Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 14 | Тĕрĕслев ĕçĕ. «Опытпа паллашнă» текст. (Л.П.Сергеев, Г.Ф.Брусова, В.В.Павлов. «Диктант тексчĕсен пуххи» 5-9 классенче чăваш чĕлхи вĕрентекен учительсем валли. Ш.,2012. – 49стр.) | 1 |
| 15 | Вырăс чĕлхинчен йышăннă япала ячĕсене çырасси | 1 |
| 16 | Япала ячĕсен камăнлăх форми | 1 |
| 17 | Япала ячĕсене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 18 | Тĕрĕслев ĕçĕ. «Çухалнă кушака киле илсе килтĕр пулсан». (Л.П.Сергеев, Г.Ф.Брусова, В.В.Павлов. «Диктант тексчĕсен пуххи» 5-9 классенче чăваш чĕлхи вĕрентекен учительсем валли. Ш.,2012. 51стр.) | 1 |
| 19 | ÇПАу2. «Пулăшрĕç» текст.- (М.Г.Данилова, М.З.Табакова «Сочинени евĕр изложени тексчĕсен пуххи» чăваш шкулĕн 5-9класĕсем валли», Ш.,2007.-39стр.) | 1 |
| **Паллă ячĕсем – 6 сех** | | |
| 20 | Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисемпе синтаксис уйрăмлăхĕсем | 1 |
| 21 | Паллă ячĕсен пулăвĕ | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 22 | Паллă ячĕсен пахалăх виçине палăртакан формисем | 1 |
| 23 | Паллă ячĕсен палăрту форми | 1 |
| 24 | Паллă ячĕсен морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 25 | Тĕрĕслев ĕçĕ. «Анкарти хыçĕнчи вăрман» текст.- (М.Г.Данилова, М.З.Табакова «Сочинени евĕр изложени тексчĕсен пуххи» чăваш шкулĕн 5-9класĕсем валли», Ш.,2007.-55стр.) | 1 |
| **Хисеп ячĕсем – 8 сех** | | |
| 26 | Хисеп ячĕсем çинчен ăнлантарни | 1 |
| 27 | Тулли тата вак хисеп ячĕсем | 1 |
| 28 | ÇПАу3. « 171-мĕш хăнăхтарури ĕçе пурнăçласси» | 1 |
| 29 | Валеçӳ хисеп ячĕсем | 1 |
| 30 | Йĕрке хисеп ячĕсем. | 1 |
| 31 | Пĕтĕмлетӳ хисеп ячĕсем. | 1 |
| 32 | Хисеп ячĕсене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 33 | Тĕрĕслев ĕçĕ. «Кашалотсем» текст. (Петрова Л.Г., Егорова В.А. «Диктант пуххи»,5-9кл валли. – Ш.,2006.- 66стр.) | 1 |
| **Местоименисем – 11сех** | | |
| 34 | Местоименисем | 1 |
| 35 | Местоимени ушкăнĕсем. Сăпат местоименийĕсем. | 1 |
| 36 | Таврăну местоименийĕсем. | 1 |
| 37 | Кăтарту местоименийĕсем. | 1 |
| 38 | Ыйту местоименийĕсем. | 1 |
| 39 | Çуклăх местоименийĕсем. | 1 |
| 40 | Паллă мар местоименисем | 1 |
| 41 | Паллă местоименисем | 1 |
| 42 | Местоименисене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 43 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Л.Г.Петрова, В.А.Егорова. Диктант пуххи.Ш.,2006. 75-мĕш стр. « Наркотик – сиенлĕ чир». | 1 |
| 44 | ÇПАу5. 254-мĕш хăнăхтарури темăсенчен пĕринпе усă курса сочинени çырасси | 1 |
| **Наречисем – 5 сех.** | | |
| 45 | Наречисем çинчен ăнлантарни | 1 |
| 46 | Наречисен пĕлтерĕш ушкăнĕсем | 1 |
| 47 | Наречисен пулăвĕ | 1 |
| 48 | Наречисен танлаштару формисем | 1 |
| 49 | Наречисене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| **Евĕрлев сăмахĕсем – 4 сех** | | |
| 50 | Евĕрлев сăмахĕсемпе паллаштарни. | 1 |
| 51 | Евĕрлев сăмахĕсене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 52 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Л.П.Сергеев, Г.Ф.Брусова, В.В.Павлов. «Диктант тексчĕсен пуххи».–Ш.,2012. 62стр. «Мĕн тери илем!» | 1 |
| 53 | ÇПАу6. М.Г.Данилова, М.З.Табакова. «Сочинени евĕр изложени тексчĕсен пуххи». – Ш.,2007. -48стр. текст. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| **Глагол – 14 сех** | | |
| 54 | Глаголсем çинчен ăнлантарни. | 1 |
| 55 | Глаголсен пулăвĕ. | 1 |
| 56 | Кăтарту наклоненийĕ. Хальхи вăхăт. | 1 |
| 57 | Пулас вăхăт | 1 |
| 58 | Пĕрре иртнĕ вăхăт | 1 |
| 59 | Темиçе иртнĕ вăхăт | 1 |
| 60 | Кăтарту наклоненийĕнчи глаголсене вĕреннине пĕтĕмлетесси | 1 |
| 61 | Ĕмĕт наклоненийĕ | 1 |
| 62 | ÇПАу6 «Манăн ĕмĕтĕм» темăпа сочинени çырасси | 1 |
| 63 | Хушу наклоненийĕ | 1 |
| 64 | Килĕшӳ наклоненийĕ | 1 |
| 65 | Глаголсене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерни. Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 66 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Л.Г.Петрова, В.А.Егорова. «Диктант пуххи» Ш.,2006., 106стр. «Шурă кăвакарчăн» текст. | 1 |
| 67 | ÇПАу «Асăмра юлнă пĕр самант» сочинени. | 1 |
| **Текст- 2 сех.** | | |
| 68 | Ансат калаçупа сăпайлă калаçу | 1 |
| 69 | Калав, сăнлав, ăслав | 1 |
| **Пĕтĕмлетӳ – 1 сех.** | | |
| 70 | 6-мĕш класра вĕреннине аса илесси | 1 |